# МУРКАШ РАЙОНĔ – 75 ÇУЛ:

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин***

## Пĕчĕк бизнес – пысăк усă

***Район аталанăвĕнче пĕчĕк тата вăтам предпринимательство паллă вырăн йышăнать, субъектсем районта пурăнакансене ĕç вырăнĕпе тивĕçтерессĕ, район бюджетне пуянлатма пулăшаççĕ. Кăçалхи 9 уйăх кăтартăвĕ тăрăх, районта 685 предпринимательство субъекчĕ ĕçлет, вăл шутра пĕчĕкки – 104, вăтамми – 4, уйрăм предпринимательсем – 497, 80 хресчен (фермер) хуçалăхĕ.***

***Асăннă сферăра пĕтĕмпе 3617 çын тăрăшать, вăл шутра 1867-шĕ – пĕчĕк предприятисенче, 89-шĕ – хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче, 953-шĕ – вăтам предприятире, 708-шĕ – уйрăм предприниматель. Районти предприятисемпе организацисенче ĕçлекенсен шайĕпе танлаштарсан, пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăра тăрăшакансен тӳпи 23,4 процентпа танлашать. Кăçалхи 9 уйăхра пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсем вырăнти бюджета 33791,63 пин тенкĕ, пĕрлехи бюджета 39206,15 пин тенкĕ налук тӳлевĕ куçарнă. Муниципалитет бюджетне килекен асăннă субъектсен налук тӳлевĕн тӳпи 32,9 процентпа танлашать.***

***Бизнеса аталантарассинче патшалăх шайĕнчен уйăракан грантсемпе субсидисем пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чăваш Республикин тĕрлĕ министерстви урлă пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсем, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем патшалăх пулăшăвĕпе пурлăх базине пуянлатса пыраççĕ. Кăçал районти 3 хресчен (фермер) хуçалăхĕ гранта тивĕçрĕ.***

## Пуçаруллисен – хĕл кунĕнче те ешĕл сухан

**Сăн ӳкерчĕкре** куракан Татьяна Волкова 2016 çулта 1 миллион тенкĕлĕх гранта тивĕçрĕ. Çемье тӳпине хывнипе тата патшалăх пулăшăвĕпе усă курса хуçалăх Муркашра 500 тăваткал метрлă теплица туса лартнă. Ку пысăк объекта хуçалăхра ăсталанă, никĕсĕпе каркасне çирĕп тунăран çут çанталăк пулăмĕсем те чăрмав кӳмеççĕ.

Патшалăх пулăшăвĕ илессин йĕркипе килĕшӳллĕн хуçалăхăн çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелемелле. Волковсем килтисемсĕр пуçне икĕ çынна ĕçе официаллă йĕркепе йышăннă, вĕсем тĕлĕшпе тӳлевсене вăхăтра куçарса пыраççĕ. Ĕç вырăнĕ лайăх, ăшă, çутă, йăлтах тивĕçӳллĕ, ку енĕпе ӳпкев çук. Çакăн пек пуçаруллă çынсем ĕç вырăнĕсем туса панине ырламалла.

Хуçалăх тата финанс ĕçĕсене Т. Волкова тата унăн ачисем çемйисемпе пĕрле пурнăçласа пыраççĕ. Кашнинех пултарулăхĕпе тăрăшулăхĕ пысăк пулнине палăртса хăвармалла. Унсăрăн ĕç кал-кал пымĕччĕ.



– Чăнах та малтан йывăрлăхсем те пулнă, халĕ чăрмавсене хыçа хăвартăмăр. Теплицăри ĕç сезонлă, кăçал вăрлăха иртерех кӳрсе килтĕмĕр, сентябрьте лартма пуçларăмăр, апрельте ку енĕпе ĕçлессин сезонĕ хупăнать. Сезонта вăтамран 20 тонна ешĕл сухан ӳстерсе сутатпăр. Эпир хăвăрт ӳсме пулăшакан нимĕнле им-çампа та усă курмастпăр, продукци пахалăхлă тата экологи тĕлĕшĕнчен таса. Туянакан енчен чăрмав çук, яланхи клиентсем пирĕн. Муркаш райповĕн точкисене туллин тивĕçтеретпĕр, Шупашкарта хамăрăн точка пур, уйрăм çынсем туянаççĕ, Чул хуларан килсе илсе каяççĕ. Пирĕнпе ĕçлес текенсем халĕ татах та йышланчĕç, ĕçлес кăмăл пысăк, малалла аталанас тетпĕр, – паллаштарать хуçалăх ĕçĕпе Сергей Волков.

Татьяна Волкова каланă тăрăх, çимĕçе сутлăха ăсатиччен пахалăх енчен ятарлă тĕрĕслев витĕр тухать, ку енĕпе вĕсене асăрхаттару пулман. Сутлăхлăх хăярпа помидор та ӳстернĕ. Çитес вăхăтра çавăн пекех туянакан ыйтнине кура укроп, руккола тата ытти ешĕл çимĕç ӳстерессĕн, продукци туянакан йышлă пулнине шута илсе тепĕр теплица тăвас ĕмĕт те пур. Апла пулсан пуçаруллă çынсен ĕмĕчĕсем вăя кĕрсе пыччăр, ăнăçу пултăр вĕсен.

## «Эпĕ – район тантăшĕ»



**Сăн ӳкерчĕкре Муркашра пурăнакан Нина Воробьевăна куратăр. Халĕ вăл тивĕçлĕ канура, унччен ĕç ĕмĕрне ветеринари енĕпе çыхăнтарнă.**

– Шкулта вĕреннĕ чухнех выльăх тухтăрĕ пулас килетчĕ, çак ĕмĕт хамăр патри ветеринарсем ĕçленине курса çуралчĕ пулмалла. Вĕсем те çын тухтăрĕ пекех ырă ĕç тăваççĕ вĕт. Шкултан тухсан нумаях шухăшламарăм, ветеринар пулас терĕм. Ман ĕмĕте килтисем татас темерĕç. Вĕренсе тухсан ĕç тупатăпах терĕм, – аса илет çамрăклăх çулĕсене ветеран.

Шупашкар районĕнчи Юртукасси ялĕнче çуралса ӳснĕ Нина шкулта пĕлӳ илнĕ хыççăн Хусана вĕренме кайнă. Вăрăм çула тухасси, паллах, ăна шиклентернĕ, тăван килтен ытла та аякра вĕт. Вĕренӳре вăл малтисен шутĕнче пулнă, çавăн пекех обществăлла ĕçе, мероприятисене хутшăнма вăхăт çитернĕ.

Пĕр çулхине вара унăн практика сехечĕсене Муркашра иртттерме тивнĕ. Ветеринаринче пысăк опыт пухнă врачсемпе ытти специалист епле ĕçленине питĕ тĕплĕн пăхса пынă, кĕçех ăна тĕрлĕ процедура тума, ыттисемпе пĕрле вырăнсене тухса ĕçлеме шаннă. Çак вăхăтсенче Нина ветеринари врачĕ еплерех кирлĕ пулнине туйса, профессие тĕрĕс суйланине ăнланса илнĕ.

Акă алла диплом илнĕ çамрăк специалистшăн ĕçлеме кайма çул уçă. Ăна Красноармейски районне ĕçлеме кайма сĕннĕ. Çак вăхăтрах аслă пĕлӳ заведенине пирĕн районта та ветеринари врачĕ кирлине пĕлтернĕ. Практика вăхăтĕнче хăйне лайăх енчен кăтартнă çамрăк врачăн чунĕ Муркаш районне суйланă. Выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци коллективĕ те ăна ырласа йышăннă.

– Мана Муркаш районĕ тата районти вăл вăхăтри ветеринарсем практика вăхăтĕнчех килĕшнĕччĕ тата эпĕ çакăнта ĕçлесе те курнă. Çавăнпа та урăх çĕре каяс темерĕм. Çапла манăн ĕç те çакăнта пысăк пĕлтерĕшлĕ пуласине шутласа Муркаша çитрĕм, – терĕ вăл вĕренсе тухнă хыççăн района суйлани пирки.

Нина Сергеевна Муркаш районĕнче 1968 çултанпа вăй хума пуçланă. Вăл ветеринари врачĕнче, ветеринари лабораторийĕн директорĕнче те тимленĕ. Тивĕçлĕ канăва тухсан та пилĕк çул юратнă ĕçрен уйрăлман, районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцире тăрăшнă.

– Çулĕсем хăвăрт иртеççĕ, район тантăшĕ эпĕ. Ĕç çулĕсене лайăхпа анчах аса илетĕп. Район аталанăвĕнче манăн та пĕчĕк тӳпе пурах тесе шухăшлатăп. Тин çеç ĕçлеме пынă çамрăк специалистсене те ĕçе хăнăхтарса вĕрентме, хамăн ĕç опытне вĕсене пама тăрăшрăм. Халĕ те вĕсем мана ырăпа асăнаççĕ, уявсем ячĕпе саламлама та манмаççĕ, – кăмăллăн калаçать ветеран.

Ветеринари врачĕ хушма хуçалăх тытакансене, тăвата ураллă туссене усракансене яланах ĕçпе те, ырă сĕнӳпе те пулăшса пынă. Пĕри сиплеме ыйтать, тепри тĕрĕслев иртттерме чĕнет – çак ĕçсене тӳрĕ чунпа пурнăçласа çул хыççăн çул сисĕнмесĕрех чупать. 1995 çулта Нина Воробьевăна «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ветеринари врачĕ» ят параççĕ. Çавăн пекех унăн ĕçри тăрăшулăхне, пултарулăхне тĕрлĕ Хисеп хучĕпе Тав çырăвĕ çирĕплетеççĕ. Çакăн пек тăрăшуллă та хастар çын вăл хисеплĕ Нина Воробьева.

## «Ĕç стажне 43 çула çитертĕм»



**Сăн ӳкерчĕкре Платкасси ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Шаптак ялĕнче пурăнакан Ираида Тихоновăна куратăр. Вăл тивĕçлĕ канури ветеран, апла пулин те вăл çамрăк чухнехи пекех вăр-вар, тирпейлĕ тата ырă кăмăллă.**

...Фаинăпа Михаил Игнатьевсен çемйинче пĕрремĕш ача Ира ятлă хĕр çуралнă, ун хыççăн татах çемьене тепĕр икĕ çĕнĕ кайăк вĕççе килнĕ. Ытти ачасем пекех Ира куллен шкула чупнă, ашшĕ-амăшне пулăшнă, тирпейлĕхпе тата ĕçченлĕхпе палăрса тăнă. Ачалăх çулĕсенчех унра чĕр чунсене юратни, вĕсемшĕн тăрăшни сисĕннĕ.

Акă вăл шкултан вĕренсе тухнă, пĕлĕве вара малалла тăсма васкаман. Çемьене укçа-тенкĕ енчен тĕкĕ пултăр тесе Ира тӳрех ĕç çумне çыпăçнă, Шупашкар хулинчи электроаппаратура тăвакан заводра виçĕ çул тăрăшнă.

Каярах вара алла професси илесси пирки шухăшласа 1980 çулхине Патăрьеле ветеринара вĕренме кайнă. Пĕр çул хушшинче професси илнĕ хыççăн тăван енне таврăннă та Киров ячĕпе хисепленекен хуçалăхра ветеринарта ĕçлеме тытăннă.

Çамрăк специалиста Шаптак ялĕнчи Алеша куç хывнă, çивĕч те çыпăçуллă хĕре алăран вĕçертмен, 1981 çулхине Ирăн çуралнă кунĕнче çамрăксем çемье çавăрнă.

Тепĕр çулхине Ира ĕç вырăнне улăштарнă, Ленин ячĕпе хисепленекен хуçалăхра тăрăшма тытăннă. Малтан – сыснасем, кайран пăрусем пăхнă çĕрте вăй хунă. Çапла колхоз ĕçĕнче 2017 çулччен тăрăшнă. Ĕçе яланах тирпейлĕ тата тӳрĕ чунпа пурнăçланăшăн вăл коллективра хисепре пулнă. Тăрăшулăхпа пултарулăхне колхоз, районпа республика шайĕсенчи Хисеп хучĕсемпе Тав çырăвĕсем çирĕплетеççĕ.

– Ферма тесе тиркесе тăман, вĕçĕмех ĕçе васканă. Пĕтĕмĕшле ĕç стажне 43 çула çитертĕм. Фермăра малтанхи çулхисемпе хальхине танлаштарсан, уйрăмлăхĕ самаях. Халĕ çĕнĕлле ĕçлеççĕ тата йăлтах механизаци мелĕпе пулса пырать. Ĕçрен хăрамалла мар, ĕçлесен пурăнма пулать, – кăмăллăн калаçать Ираида Тихонова.

Мăшăр виçĕ ача çуратнă. Ираида тăтăшах колхоз ĕçне хутшăннăран, ачасене хуняшшĕпе хунямăшĕ ӳстерме пулăшнă. Халĕ те Ираида Тихонова ларса канма пĕлмест. Тăтăшах хушма хуçалăхра тăрăшать, выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк пăхать, йышлă выльăхпа ĕçлемелли нумай çав.

Ĕç ветеранĕ çамрăк чухнехи пекех чечексем лартса ӳстерме çав тери юратать. Картишĕнче те, пӳлĕмре те мĕн тĕрлĕ кăна чечек çук пулĕ. Илемлĕхпе тирпейлĕхе юратакан тараватхĕрарăм ял-йышпа, тăванĕсемпе килĕштерсе пурăнать, çавăнпа та ăна пурте хисеплеççĕ.

Вăхăчĕ хăвăрт иртет, çулĕсем те васкаççĕ. Халĕ Ираида Тихонова нумай çул вырăнпа выртакан хунямăшне пăхать, çавăн пекех ултă мăнукĕн кăмăлне тивĕçтерме те вăхăт тупать.

# ИРТНИСĔР МАЛАШЛĂХ ÇУК

*тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçа кĕрет*

# Музыка инструментне тытманни пĕр кун та пулман пулĕ?

**Юрий Жукова районта кăна мар, республикăра та пĕлмен çын сайра пулĕ. Вăл Чăваш композиторĕсен ассоциацийĕн членĕ, Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, халăх юратакан композитор, ятлă-сумлă çын, районти художество пултарулăх ушкăнĕсен ертӳçи. Муркашри ветерансен хорне йĕркелекенĕ те Юрий Нестерович. Çак хор республика шайĕнче те ырă ята тивĕçрĕ.**

Юрий Жуков Етĕрне районĕнчи Янăм ялĕнче 1950 çулта çуралнă. Унăн ашшĕпе амăшĕ те юрра-кĕвве юратакан çынсем пулнă. Юрий 3-мĕш класа кайнă чухне хăй тĕллĕн хуткупăспа калама вĕреннĕ. Шкулти пĕр концерт та вăл хутшăнмасăр иртмен. Пĕррехинче Етĕрнере Юрий хутшăннă пултарулăх ушкăнĕн ăсталăхне пысăка хурса хакланă, ушкăн Шупашкарти пĕтĕмлетӳ концертне кайма тивĕçнĕ. Жюрире Виктор Ходяшев композитор, Чăваш патшалăх педагогика университечĕн музыка факультечĕн деканĕ Юрий Потеряхин пулнă. Концерт хыççăн вĕсем Юрие чĕнсе илнĕ те музыка енĕпе ятарлă пĕлӳ илме сĕннĕ.

Малтанхи «Вишенка» юрра вăл 9-мĕш класра чухне çырнă. Хыççăн та юрăсем хайланă, анчах та, иментнипе-ши, халăх патне çитерме васкаман. Каярах «Юратнă кăмăллă аннем», «Хĕрарăм куççулĕ», «Тавах сире, атте-анне» тата чылай ытти юрă кун çути курса итлекен патне çитнĕ. Юрăсене ытларах В. Шемекеевăн, В. Давыдов-Анатрин, Ю. Сементерĕн, Л. Туктинан сăввисемпе хайланă.

К. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи театрĕн репертуарне кĕртнĕ В. Леканов çырнă «Юратсан юрлас килет» 2 пайлă камитре те Юрий Жуков кĕвĕленĕ юрăсем янăраççĕ. Унăн юррисенче чуна тыткăналакан кĕвĕ, вĕсенчи чăвашлăх туйăмĕ, чуна тивекен сăмахсем палăраççĕ. Сăвă суйласа илессине вара вăл пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç тесе шутлать. Хăй те ачаранах сăвă йĕркисем шăрçаланă, çавăнпа сăвă пахалăхĕ мĕнрен килнине аван туять, тарăн шухăшлă сăвăсене кăна суйласа илет.

Муркашсем ăста композитора 1973 çултанпа пĕлеççĕ. Района килсенех вăл агитбригадăпа тухса çӳренĕ, организацисене çитсе хорта юрлама кăмăл тăвакансене пуçтарнă: 15 хĕр, 8 каччă юрлама килĕшнĕ. Юрий Жуков ертсе пыракан ушкăн районта кăна мар, Шупашкарти смотрсенче те çӳллĕ шайра пулнă, çулталăк та иртмен, халăх ятне илме пултарнă.

Ăста композитор Муркаш шкулĕнче нумай çул музыка преподавателĕнче тăрăшнă. Шупашкарти музыка училищинчен ун патне тăтăшах çамрăксене практикăна янă, 45 – 50 студент ун патĕнче ăсталăха ӳстернĕ. Пурте пĕлекен Виталий Адюков юрăç та çав шутра пулнă.

Ачасене музыкăна вĕрентнĕ хушăрах художество пултарулăх коллективĕсен ĕçне те хастар хутшăннă. Вăл ертсе пынă коллективсем тĕрлĕ конкурсра, смотрта лайăх енĕпе палăраççĕ. 1994, 1998 çулсенче Мускавра иртнĕ Чăваш культурин кунĕсене ытти искусство ĕçченĕсемпе Ю. Жуков та хутшăннă. 1997 çулта Турцире тĕрĕк халăхĕсен фестивалĕнче пулнă. Ăста композитора республикăра иртекен ятлă-сумлă конкурссенче жюри членĕ пулма шанаççĕ. Унăн ырă ĕçĕсене татах та асăнма пулать.

Юрă-кĕвĕ ăстин пысăк пултарулăхне вăл тивĕçнĕ Хисеп грамотисемпе Тав çырăвĕсем, вăл шутра 2009 çулхи Чăваш Республикин Президенчĕн Тав çырăвĕ тата ытти чыслав çирĕплетеççĕ.



# Мăшăра – Тав çырăвĕ



**Сăн ӳкерчĕкре Юнкă ял тăрăхĕнчи хисеплĕ çынсене Луиза Евстафьевнăпа Вячеслав Иванович Аргандеевсене куратăр. Çемье обществăлла ĕçре те хастар. Тăрăшуллă хĕрарăм – Юнкă ялĕн старости. Луиза Евстафьевна çынсен шанăçне тӳрре кăларма тăрăшать. Вячеслав Иванович обществăлла транспорт водителĕнче вăй хурать.**

Мăшăр 37 çул пĕрле килĕштерсе пурăнать. Вĕсем виçĕ ачана ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă, улмисем те йывăççинчен аякка ӳкмессе шанас килет. Халĕ Аргандеевсен тăватă мăнук, кĕçĕн ăру – пирĕн пуласлăх.

Мăшăр çемье йăли-йĕркине çирĕп тытса пынăшăн тата ачасене тивĕçлĕ воспитани парса ӳстернĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн Тав çырăвне тивĕçрĕ. Юнкă ял тăрăхĕ вĕсемпе мухтанать тата мăнаçланать. Шăпах та çакăн пек çынсемпе пирĕн район тĕреклĕ.

# Сывлăха хаклама, çынна ырă тума тăрăшар

**Сăн ӳкерчĕкре Клавдия Петровнăпа Константин Георгиевич Марковсене куратăр. Хисеплĕ мăшăр пирки ыррине чылай палăртма пулать, вĕсем чăннипех те пултаруллă, тăрăшуллă çынсем. Çапах та çемье çут çанталăк ырлăх-пурлăхĕпе усă курса çынсен сывлăхĕшĕн усăллă ĕç чылай тунине чи мала кăларас килет, вĕсен пулăшăвне туйса курнă çынсем çакна çирĕплетме пултараççĕ.**

Марковсем аякри тăрăхсенчен, Атăл урлă пысăк вăрмансенчен, хамăр патри улăх-çарантан мĕн тĕрлĕ кăна сиплĕ курăк-чечек, çырла пухмаççĕ пулĕ. Хăшне-пĕрне эпир илтмен те.

– Кашни çын сывлăха хаклама, уншăн тăрăшма пĕлтĕр. Юлашки вăхăтра тĕрлĕ чей пуххипе хурт-хăмăр продуктне саккас паракан йышланчĕ, ку вăл çынсем сывлăх çине ытларах тимлĕх уйăрнипе çыхăннă. Хамăр хушма хуçалăхра сывлăхшăн усăллă чылай япала хатĕрлетпĕр, çынсене те сĕнетпĕр, тĕслĕхрен, вĕлле рамисене сăтăр тăвакан кĕве хурт та сывлăхшăн питĕ усăллă, – паллаштарать Клавдия Петровна пӳлĕмри тĕрлĕ сиплев продукчĕпе.

Пур ĕçре ĕлкĕрме вăхăтне ăçтан тупаççĕ-ши? Çемье Ивановкăра утар тытать. Унта тăрăшассине Константин Георгиевич ытларах хăйĕн çине илнĕ. Вăл Мăн Шаптак ялĕнчи вунă ачаллă çемьери саккăрмĕш ача пулнăскер, утарçă династине çирĕп тытса пырса малалла тăсать. Утарçă каланă тăрăх, хурт-хăмăрпа ĕçленĕ чухне мĕнпур йывăрлăха манать, вĕсемпе калаçать, ĕç кал-кал пынипе савăнса хуртсемпе калаçнă евĕр шăппăн кăна юрласа илет. Çакăн пек самантра ăна нимĕн те кирлĕ мар. Унта ĕшеннине вăл кану евĕр шутлать. Вĕллесемпе ĕçлеме вара усă кăмăл кирлĕ иккен. Хурт-хăмăр тытас енĕпе çемье пысăк ăста пулин те, тĕрлĕ вĕренӳ, семинарсене хутшăнать, ыттисен ĕç опычĕпе паллашать. Хурт-хăмăр продуктĕнчен те тĕрлĕ сиплев хатĕрлеççĕ вĕсем.




Çавăн пекех утарçă юрă-кĕвĕ ăсти пулнине те палăртса хăвармалла. Константин Марков çамрăк чухне «Сельхозтехника» предприятийĕнче ĕçленĕ çулсенче çак предприяти çумĕнчи художество пултарулăх ушкăнне çӳренĕ, каярах вăл Орининти «Шуракăш» ансамбле хутшăннă. Çак вăхăтсенче унăн пĕрремĕш «Кăкшăм курăкĕ» юрă çуралнă. Халĕ вара унăн кĕввисене «Чăваш радиовĕн» тата «Наци радиовĕн» каналĕсемпе тăтăшах илтме пулать. Районти тата республикăри юрăпа ташă ансамблĕсем унăн кĕввисене хăйсен репертуарне кĕртнĕ. Кĕввисем лирикăпа çыхăннă, савăнăçлă, кăмăла çĕклеççĕ. Вĕсенче чăвашлăх, халăхăн чунĕ уйрăмах палăрса тăрать. Унăн ку тĕлĕшпе ятарлă пĕлӳ çук пулин те, «Кĕмĕл шыв юххи» юрă пуххи кăларма пултарчĕ. 2015 çулхине ăна композитор ятне пачĕç, Чăваш Енти композиторсен пĕрлĕхне илчĕç.

Çемье пуçĕн пултарулăхĕ чăн та чикĕсĕр, вăл сĕтел-пукан ăсти, ата-пушмак маçтăрĕ тата ытти те. Хуçалăхри ĕçсене çемье пĕрле тума тăрăшать, 3 хĕрĕпе вĕсен çемйи нихăш ĕçрен те аякра тăмаççĕ.

Çемье вучахне упракан Клавдия Петровна вара уйрăм тав сăмахне тивĕç. Ырă кăмăллă хĕрарăм ахальтен мар ĕнтĕ пархатарлă профессие – воспитатель ĕçне суйласа илнĕ, Муркашри «Солнышко» ача сачĕн ертӳçинче пĕр улшăнмасăр 30 çул тăрăшнă. Вăл «пысăк» чĕреллĕ анне, мăшăр тата юлташ, йăлтах ăнланать, каçарать, ырă сĕнӳпе, ĕçпе пулăшать.

– Пурнăç вăл çавăн пек, ырă туни те, япăх ĕç те каялла таврăнать. Чылай чухне вара çакă сывлăх çинче палăрать. Çавăнпа та ырă кăмăллă пулма, çынна ырă сунма кăна тăрăшмалла. Сывлăха упрамалла, халĕ сывлăха çирĕплетме майсем çителĕклĕ, бассейн ĕçлени те питĕ лайăх, усă сывлăшра утма та никам та чăрмантармасть, – терĕ Клавдия Петровна сывлăх çине ытларах тимлĕх уйăрмаллине палăртса.

Марковсен тăрăшулăхне, пултарулăхне тĕрлĕ Хисеп грамоти, Тав çырăвĕ çирĕплетет. Çакăн пек пархатарлă çынсемпе пирĕн район мухтавлă.

**Кăларăма хатĕрлекенсем:**
**Р. Макарова, А. Белов,**
**В. Шапошников, Н. Николаева.**